Муниципальное бюджетное общеобразовательное учреждение
«Алманчиковская основная общеобразовательная школа»
Батыревского района Чувашской Республики

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА
## по литературному (чувашскому) чтению (1-4 классы) на уровне начального общего образования (предметная область «Филология»)

**Составители:** **Фомина Ирина Николаевна,** учитель высшей квалификационной категории
**Степанова Алина Николаевна,** учитель первой квалификационной категории
**Никитина Валентина Владимировна,** учитель первой квалификационной категории
**Косолапова Любовь Саввична,** учитель первой квалификационной категории

с. Алманчиково

# 1. Предметăн пулас результачĕсем

**Харкамлăх (личностные):**

- ачасем хăйсем вĕренекен пулнине ăнланни, вĕренекенĕн яваплăхне уçăмлани;

- ачасем тăван çĕршыв, тăван халăх, тăван чĕлхе, литература ăнлавсене ăша хывни, хăйсем хăш халăх ывăл-хĕрĕ пулнине ăнланни, вĕсен тăван халăха хисеплес туйăм амаланма пуçлани;

- ачасем таврари пурнăç, этем, çут çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатни, тавракурăмĕ йĕркеленсе пыни;

- харпăр хăй хăтланăвĕсене сăнама-асăрхама, вĕсемшĕн  яваплă пулма хăнăхса пыни;

- шкулта, класра, урамра, килте, хăнара хăвна мĕнле тытмаллине, уроксене мĕнле хатĕрленмеллине, ĕç вырăнне хатĕрлемеллине, парта хушшинче мĕнле лармаллине, ĕç  хатĕрĕсемпе мĕнле ус= курмаллине, ĕçе тăрăшса, тимлĕ, тирпейлĕ тумаллине ăнланни;

- тимлĕх калăпăшĕ, пахалăхĕ, самантлăх, ятарлă тата ирĕклĕ астăвăмĕ аталанни;

- хайлавсенчи сăнарсен лайăх тата начар енĕсене шута илни;

- пĕчĕккĕн аслисемпе пĕрле ĕçе хăнăхса пымаллине, пурнăçра çак хăнăхусем кирлĕ пулассине ăнланни;

- ĕмĕтленни, вĕренни пурнăçра кирлĕ пулние тавçăрни.

- шкулта вĕренни пĕлӳ пухмалли, аталанмалли, харпăр хăй пурнăçне кăсăклăрах, усăллăрах тума вĕренмелли тĕп мел пулнине ăша хуни;

- ачан кăмăл-сипечĕ çырĕпленсе пыни: ваттисене хисеплемеллине, çынпа ырă пулмаллине, çынсем хушшинче хăвна мĕнле тытмаллине, чĕр чунсене юратмаллине ăнланса илни;

- шухăшлав ăслайĕсем туптанни.

**Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем (метапредметные)**

***Пĕлӳлĕх(познавательные):***

- итленĕ е вуланă чух мĕнле лармаллине тата урокра кирлĕ хатĕрсемпе мĕнле усă курмаллине пĕлни;

- таврари япаласене, пулăмсене тĕпчес ăнтălав аталанни;

- таврари япаласемпе пулăмсем çинчен мĕн пĕлнине системăлани: «Тăван çĕр-шыв» ăнлава уçăмлани. Вăл çуралнă вырăн, тăван ял, тавралăх, хăй пурăнакан  республика тата çĕр-шыв (Раççей) пулнине ăнланни, унăн культури, мухтавлă çыннисем çинчен пĕлни; çут çанталăк законĕсем, япаласемпе пулăмсем пĕр-пĕринпе çыхăнса аталаннине курни;

- тавралăх енĕсене, япалан вырăнне кăтартма, тавралăхри вырăнне палăртма пĕлни;

- япаласен пĕрпеклĕхне, уйрăмлăхне, вĕсем мĕнпе уйрăлса тăнине курма, палăртма пултарайни;

- ачан тавракурăмĕ анлăланни: çут çанталăкри пулăмсем, çулталăк вăхăчĕсем, çемье, чĕр чунсем, ачасен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлни, тĕнче курăмĕ йĕркеленсе пыни;

- туйăм культури çивĕчленни: кирлĕ вăхăтра пулăшма, мĕн тумалла, мĕнле тумаллине тавçăра пуçлани;

-пысăк, пĕчĕк, тан услăха курни, логикăллă шайлаштарайни;

- вĕренӳ хатĕрĕсенче кирлĕ материала шыраса тупма пĕлни;

- вĕренӳ хатĕрĕсенче панă символсене, модельсене, схемăсене,паллăсене ăнланни;

***Йĕркелӳ-хаклав(регулятивные):***

- тантăшĕсен тата харпăр хăй ĕçне тищкерейни тата пахалайни;

- тишкерӳ – пĕтĕçтерӳ ĕçне хăнăхни, пĕтĕмĕшлине пайсем çине уйăрма, пайĕсене пĕтĕçтерме пĕлни;

- тĕрĕс курма, япаласен уçлăхри вырăнне палăртма пултарни;

- хăйĕн ĕçне вĕрентекен, юлташĕсем хакланине йышнни;

- вĕрентекен, класпа пĕрле палăртнă задачăна татса памалли тĕрлĕ майсем тупни;

- хăвăн шухăшна ăнлантарса парайни;

- йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;

- ĕç йĕркине, мĕн хыççăн мĕн тумаллине, мĕншĕн ун пек тумаллине тавçăрни;

- ĕçĕн кашни тапхăрне вĕрентекен пулăшнипе хак парса пырайни;

- харпăр хăй ĕçне планлама пĕлни.

***Хутшăну(коммуникативные):***

- шухăша тĕрĕс те уçăмлă, çыхăнуллă каласа пама тăрăшни;

- текстпа ĕçлеме пĕлни, вулани çинчен çыхăнуллă тата уçăмлă каласа пама тăрăшни;

- ачан пуплевĕ, йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;

-пуплев культури аталанни: пĕр-пĕр япала, пулăм, ĕç çинчен çыхăнуллă, кирлĕ сăмахсемпе усă курса каласа пама пултарни; юлташпа, аслисемпе, ваттисемпе мĕн çинчен тата мĕнле сăмахсемпе усă курса калаçмаллине ăнкарни, кампа калаçнă чух, хăçан, мĕнле сăмахсемпе (сывлăх сунни, тав туни, сывпулашни) усă курмаллине тавçăрни;

- çывăх, хирĕçле, пĕр пĕлтерĕшлĕ, нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсене тĕрĕсрех, тарăнрах ăнланни, вĕсен ретĕнче кирлине суйлайни;

- сăмахсен куçăмлă пĕлтерĕшне ăнланни;

- чăваш чĕлхинче сăмахсен предложенире çирĕп йĕрке пуррине ăнланни, ăна пуплевре тытса пырайни;

- каласа парассин тĕрлĕ тĕсĕсене (калав, сăнлав, уйлав) пĕлни. Вĕсен тытăмĕпе уйрăмлăхĕсене курма, калавăн тĕрлĕ тĕсне йĕркелеме пултарайни;

- калав темине, тĕп шухăшне палăртайни;

- хутшăну пуплевĕ (диалог) тытăмне, унти предложенисен хăй евĕрлĕхне (ытларах тулли мар предложенисем) пĕлни. Диалог шалашĕ пĕр темăна, пĕр тĕп шухăша пăхăнса тăнине ăнланни. Майĕпен хутшăну пуплевне тĕрлĕ пуплев ситуацийĕсенче усă курма пултарни;

- ушкăнпа ĕçлеме пĕлни;

- сăмах йышĕ пуянланни;

- çынсем тĕрлĕрен шухăшлама пултарнине ăнланни.

***Предметăн пайрам (предметные) результачĕсем:***

- илемлĕ хайлавсене йышăнма, итлеме-ăнланма малалла хăнăхса пыни;

- «халăх сăмахлăхĕ», «ача-пăча сăмахлăхĕ» ăнлавсене уçăмлама пĕлни;

- чĕнӳ-йыхрав юррисемпе паллашса вĕсене мĕнле тĕллевпе каланине палăртма пултарни, мĕнле йĕркеленине сăнама пĕлни;

- шутлав сăввисем тахçан авал пулса кайнине ăнланни;

- тупмалли юмахсен хăйевĕрлĕхне, тытăмне сăнама пĕлни;

- илемлĕ хайлав мелĕсене (танлаштару, сăпатлантару) уйăрса илме пĕлни, вĕсене тупмалли юмахсенче тупайни; тупмалли юмахсем хайланă чухне çак мелсемпе усă курма пĕлни;

- «юмах» жанрăн хăйевĕрлĕхне ăнланса илни; юмах логикипе сюжетне сăнама пултарни; юмах тытăмĕн хăш-пĕр вăрттăнлăхĕсене уçăмлама ăнтăлни;

- «илемлĕ литература», «хайлав», «автор» ăнлавсене усса пама пултарни;

- «калав», «сăвă» ăнлавсене уçăмлайни;

- сăвăласа çырнă хайлавсен тулашĕ, вĕсен хăйевĕрлĕхне сăнаса курма, «рифма», «ритм» ăнлавсене уçăмлама пĕлни;

- сăвăри йĕрке вĕçĕсем сасă тĕлĕшĕнчен пĕр пек янăрани çеç çителĕксĕр, шухăш уçăмлăхĕ те пулмаллине ăнланни;

- калава ансаттăн тишкерме вĕренни;

- сăвăласа çырнă хайлавсене туйма-ăнланма (восприятие) вĕренни;

- автор сăвăсенче тĕрлĕ кăмăл-туйăма палăртнине ăнланни;

- калав мĕн çинчен пулнине ăнланни, калав темине уçăмлама вĕренни;

- калав теми унта мĕн çинчен каланипе çыхăнса тăнине ăнланни;

- илемлĕ хайлавсенчи шӳте ăнланма пĕлни.

## 2. Вĕренӳ предмечĕн шалашĕ

### 1 класс

**П\ррем\ш клас=н 1-м\ш ёурёул\нче** ачасен вулав х=н=х=в\сем й\ркеленсе ёитеймен пирки литература итлев\сем пулаёё\. Литература итлев\н т\пт\ллев\сем тесе ёаксене пал=ртатп=р:

- ачасене литература хайлав\семпе к=с=клантарса ярасси, илемл\ хайлавсене итлесе =нланма, =са хывма в\рентсе пырасси;

- ачасенче ыр=па усала, хурапа шурра туяс туй=ма, илем сис\мне амалантарса ярасси, т\нче кур=мне анл=латасси;

- ачасен =нлав пултарул=хне амалантарасси.

В\рентъ задачисемпе пулас результач\сене, й\ркелеме пал=ртн= компетенцисене шута илсе \ёе 4 тапх=ра пайлама пулать.

**1 тапх=р.** Илемл\ хайлав ёинчен п\т\м\шле =нланасси; проза тата поэзии хайлав\сем. В\сене итлеме-тăнлама, йышăнма в\ренсе пырасси.

**2 тапх=р.** Хал=х с=махл=х\. Вак жанрсем. Юмахсем. Халăх сăмахлăх\н хайлав\сем сăмах в\ёё\н в\ренине, в\сен автор\ ёуккине ăнланасси.

**3 тапх=р.** Вак жанрсемпе паллашасси, в\сен т\сл\х\сене итлесси. Тупмалли юмахсемпе пулмасла халапсем хайлассн.

**4 тапх=р.** Литература жанр\сем (калав тата сăвă), в\сене уйăрма, в\сен уйрăмлăх\сене ăнкарма, т\сл\х\сене итлеме-тăнлама, йышăнма в\ренсе пырасси.

**Икк\м\ш ёурёулта** ачасем пуёлам=ш вулав х=н=х=в\сем туянса ёитерееё\. В\сен итлев х=н=х=в\сем кал=планн= теме пулать.

Литература вулав\ темиёе т\ллеве п\рл\хл\н пурн=ёа к\ртме май панине (вулама, текстпа \ёлеме тата литература хайлавне =нланма, тишкерме в\рентесси; к\некене юратма, унпа \ёлеме, харп=р х=й т\лл\н вулама х=н=хтарасси) шута илсе уроксен пайрам тата харкам т\ллев\сем анл=ланаёё\. Анчах та в\сем п\ррем\ш ёур ёултисенчен пачах, принципл= уйр=лса т=маёё\. В\сем ёинче ник\сленсе в\сен анл=рах та тар=нрах т=с=м\ пулаёё\.

Икк\м\ш ёурёулти уроксене, в\сен т\ллев\семпе задачисене, й\ркелемелли =слай-=нланусене (компетенцисене) шута илсе т\пренилсен 2 тапх=ра уй=рма пулать.

***1 тапх=р.*** Хал=х с=махл=х\.

Икк\м\ш ёурёулта ачасен хал=х с=махл=хне в\ренесси самай анл=рах пулмалла; жанр т\л\ш\нчен те, п\лъ-=слай т\л\ш\нчен те.

***2 тапх=р.*** Литература т\с\сем (жанр\сем) (калав, с=в=, юптару).

## 2 класс

## Литература вулав\. Класс тулаш\нчи вулав

**Вулав карти. Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв?** Савнă çĕр, Чăваш çĕр-шывĕ. Пирĕн çĕр-шыври хуласемпе ялсем. Тăван республика çыннисен ĕçĕ-хĕлĕ. «Пирĕн ял (хула)» экскурси.

**Кĕркунне.** Кĕрĕн тĕрлĕ тапхăрне (пуçламăшĕ, ылтăн кĕркунне, хура кĕркунне), чĕр чунсемпе ӳсен-тăрансен пурнăçĕнчи улшăнусене сăнлакан калавсемпе сăвăсем. «Кĕрхи сăнсем» экскурси.

**Эпир - туслă ачасем.** Ачасен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ, вĕсем туслă пулни, пĕр-пĕрне пулăшни.

Ĕç **телей те савăнăç кӳрет.** Ĕç çинчен, тĕрлĕ професси çинчен, ĕçĕн пурнăçри пĕлтерĕшĕ, халăх пурлăхĕшĕн тăрăшни, ĕç çынна телей кӳни çинчен çырнă калавсемпе сăвăсем.

Хĕлле. Хĕллехи çанталăк. Чĕр чунсемпе ӳсен-тăрансен хĕллехи пурнăçĕ. Çĕнĕ çула кĕтсе илни. «Хĕл çитсен» экскурси.

**Чĕр чунсем - пирĕн туссем.** Чĕр чунсем çинчен çырнă калавсем, сăвăсем, ваттисен сăмахĕсемпе туптарусем (тупмалли юмах-сем). Чĕр чунсене хӳтĕлесси, вĕсене пулăшасси.

**Халăх сăмахлăхĕ.** Чăваш тата ытти халăхсен юмахĕсем, юррисем, ваттисен сăмахĕсемпе туптарусем.

**Тăван кил-йышра.** Пирĕн несĕлсем. Аннесемпе асаннесем, кукамайсемпе аппасем, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ, Аннесем çинчен çырнă калавсемпе сăвăсем.

**Килчĕ ырă çуркунне.** Чĕр чунсемпе ӳсен-тăрансен пурнăçĕнчи улшăнусем. Пăр кайни. Ачасен вăйăйи-кулли. Аслисен çурхи ĕçĕсем. Космонавтика кунĕ. Космонавтсем çинчен.

Çу **уйăхне кĕтĕмĕр.** Çуллахи çут çанталăк, уй-хирти тата пахчари ĕçсем çинчен çырнă калавсемпе сăвăсем, тĕрленчĕксем.

**Ӳсен-тăран тĕнчи.** Вăрман пурнăçĕ, ӳсен-тăран çинчен çырнă сăвă-юрă, калавсемпе халапсем.

**Пăхмасăр калама вĕренмелли сăвăсем:** çут çанталăк, тăван ен, тус-тăванлăх, тĕрлĕ чĕр чун çинчен калакан 5—6 сăвă (вĕрентӳçĕ сĕннисем тата ачасем хăйсем кăмăлласа суйланисем).

**Вулав хăнăхăвĕсем.** Тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр (кăткăс тытăмлă сăмахсене — сыпăкласа) вуласси, Вулав хăвăртлăхĕ — минутра 50 сăмахран кая мар (ăшра вуланă чухне сăмах шучĕ 60 - ран ӳсмелле). Вуланă чух шухăша пăсмасăр, тĕрĕс чарăнусем туса сывлăш çавăрса ярасси. Хутсăр предложенин пур тĕсĕсене те тĕрĕс интонаципе вуласси. Шухăшпа тĕлleve кура текста хăвăрт е хуллен, сасса хăпартса е хăпартмасăр вуласси.

**Текстпа ĕçлесси. Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси.** Вуланă текст тăрăх ыйтусене хуравласси, каланине текстри предложенисемпе çирĕплетесси. Текста пахаласси, ăна вĕрентӳçĕ ыйтăвĕсем е кĕнекери ӳкерчĕклĕ план тăрăх аса илсе каласси.

Вуланă текст тăрăх сăмахлă ӳкерчĕксем тăвасси. Пысăках мар калав шалашне (содержанине) пăтраштармасăр, йĕркипе аса илесси.

Кĕнекери ӳкерчĕксем мĕне сăнланине, вĕсем калавăн хăш пайне кăтартнине палăртасси, çав вырăна текстра тупасси.

Калава темиçе пая уйăрасси, вĕсене ят парасси; вуланă текстăн тĕп шухăшне палăртасси

(вĕрентӳçĕ пулăшнипе).

Илемлĕх мелĕсене - танлаштарусене, эпитетсене, метафорăсене (терминсене асăнмасăр) - сăнасси,

Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсене танлаштарасси, ун пек сăмахсене вĕрентӳçĕ пулăшнипе тупасси. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тĕрĕс ăнланасси. Вĕрентӳçĕ пулăшнипе текстра тĕрлĕ пулăма, çынна, çут çанталăка сăнарлăн кăтартакан сăмахсене тупасси, вĕсемпе сăмахлă ӳкерчĕксем тунă чух усă курасси, тавралăха сăнасси, тантăшсемпе выляни çинчен пĕчĕк калав хайласси.

Юмаха, калава, сăвва пĕр-пĕринчен уйăрса илме пĕлесси. Сасăллă пуплевĕн (калаçăвăн) пысăк пĕлтерĕшлĕ мелĕсене — хăвăртлăха, янăравлăха, сасă хулăнăш-çинçĕшне, кĕвĕлăхне кирлĕ пек улăштарма вĕренесси. Сăмахсене тĕрĕс каласси.

**Вулав кĕнекипе ĕçлеме хăнăхтарасси.** Тупмаллипе паллаштарасси, кирлĕ калав е сăвă ятне шыраса тупма вĕрентесси. Хайлав хыççăнхи ыйтусемпе ĕçсене пурнăçласси (вĕрентӳçĕ пулăшнипе).

**КЛАСС ТУЛАШĔНЧИ ВУЛАВ**

**Вулав материалĕ.** Ача-пăча валли кăларнă 8-30 страницăллă кĕнекесем. Ачасем хăйсем тĕллĕн ăшра тата тепĕр хут саспа суйласа вуламалли сăвăсем, юмахсем, калавсем (калăпăшĕ — 5 страница таран).

**Вулав тематики.** Чăваш çĕр-шывĕ, ачасен пурнăçĕпе ĕçĕсем, чĕр чунсемпе ӳсен-тăран çинчен. Тем те пĕр курса çӳрени. Юмахсем.

**Ача-пăча кĕнекипе ĕçлесси.** Кĕнекен тĕп пайĕсене, вĕсен ячĕсене (хуплашка, страницăсем, тупмалли) пĕлесси.

Кĕнекене мĕн çинченнине ячĕпе авторĕ, ӳкерчĕкĕсем тăрăх ăнкарасси (I çур çул); мĕн е кам çинчен итленине, вуланине ыйтсан тĕрĕс хуравласси.

4—5 кĕнекене темине кура ушкăнласа уйăрасси; вулав темине палăртасси, кĕнекене унăн хăйне евĕр паллисем тăрăх суйласа илесси. I çур çулта — итленĕ текста, II çур çулта—харпăр хăй теллĕн вуланине аса илсе ыйтусем тăрăх каласа парасси. Тĕрлĕ пулăма, сăнарсен ĕçĕ-хĕлĕпе хăтланкалăшĕсене тĕрĕс хак парасси. Кĕнеке куравепе, сĕнӳ плакачĕпе (I çур çул), хуплашкасен картотекипе тата ансат каталог карточкипе (II çур çул) паллаштарасси.

I—II класра тăтăшах курнă ача-пăча кĕнекисен авторĕсене тĕрĕс аса илесси.

Ачасен харпăр хăй тĕллĕн кĕнеке вулас кăмăл туртăмне вăйлатасси; класри вул авçă кĕтесне тирпейлесе тăма хăнăхтарасси, ун çине таянса тĕрлĕрен литература вăййипе паллаштарасси. Вуланă хайлавсен уйрăм пайĕсене куç кĕрет выляса кăтартасси.

**3 класс**

**Литература вулав\. Класс тулаш\нчи вулав**

**Вулав карти. Чăваш çĕр-шывĕ.** Чăваш ен илемĕ, юхан шывĕсемпе вăрманĕсем. Чăваш çыннисемпе ытти халăхсем хуш-шинчи туслăх, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнни.

**Кĕркунне.** Кĕрхи çут çанталăк, çынсен ĕçĕ-хĕлĕ. «Кĕрхи çут çанталăк» экскурси.

**Тăван тавралăха, çут çанталăка упрани, илем кӳни - Тăван çĕр-шыва сыхланиех.** Çынсем тăван тавралăха упрама, илем кӳме тăрăшыине, çак ĕçе ачасем те хутшăнма пултарнине сăнлакан калавсемпе сăвăсем.

**Эпир - сăпайлă ачасем.** Ачасен пурнăçĕ, вĕсен туслăхĕ. Ачасем хăйсене сапăр та тирпейлĕ тытма тăрăшнине, аслисене хисепленине, сăпайлă пулнине сăнлакан калавсем, сăвăсем, статьясем.

**Асамçă хĕл.** Хĕллехи çут çанталăк. Этем ĕçĕ-хĕлĕ. Чĕр чун-сен пурнăçĕ. Хĕл илемĕ калавсенче, юмахсенче, ӳнерçĕсен ӳкер-чĕкĕсенче сăнланни. «Хĕллехи çут çанталăк» экскурси.

**Халăх пултарулăхĕ.** Юмахсем, юрăсем, ва^тисен сăмахĕсемпе туптарусем (тупмалли юмахсем). Тĕрлĕ халăх юмахĕсем.

**Эпир Улăп йăхĕнчен.** Улăп халапĕсем тата ытти халăх халапĕсем.

**Çурхи хаваслăх.** Çут çанталăк чĕрĕлни. Чĕр чунсен пурнăçĕпе çынсен ĕçĕсем. Ачасен çурхи вăййисем. «Çурхи çут çантапăк» экскурси.

**Чăваш халăхĕн паллă çыравçисем.** К.Иванов, Н.Шелепи, Н.Илпек, М.Трубина, В.Харитонов, Н.Ижентей, Х.Уяр, Н.Карай сăввисемпе калавĕсем.

**Тăванла халăхсен çыравçисем.** М.Джалиль, Г.Тукай, Р.Минатуллин сăввисемпе поэма

сышăкĕсем.

**Вырăссен чаплă çыравçисем.** А.Пушкин, И.Крылов, Л.Толстой, Н.Некрасов хайлавĕсем. Вырăссен хальхи ача-пăча литературин тĕслĕхĕсем: Н.Сладков, Н.Соколов-Микитов, Л.Ковалев хайлавĕсем.

Вĕрентӳçĕ е вĕренекен суйласа илнĕ 5-6 сăвва пăхмасăр вĕренмелле.

**Вулав хăнăхăвĕсем.** Тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр, вăтам хăвăртлăхпа вуласси. Вулав хăвăртлăхĕ минутра 70 сăмахран кая мар пулмалла (ăшра вуланă чухне сăмах шучĕ 80 таран ӳсмелле). Шухăш аталанăвне кăтартакан сăмахсене ансат мелсемпе усă курса палăртасси. Шухăшне тата тĕллевне кура текста тивĕçлĕ интонаципе (хăвăрт е хуллен, сасса хăпартса е хăпартмасăр, логика пусăмĕсемпе логика тăхтавĕсем туса) вуласси. Сасăпа вуланă чухне харкам вулава асăрхаса пырасси, йăнăш вырăнсене тепĕр хут тĕрĕс вуласа тӳрлетесси. Текстра пĕлтерĕшне уçăмлатмалли сăмахсене харкам тĕллĕнех палăртасси.

**Текстпа ĕçлесси. Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси.** Вуланă текстри ĕçсем мĕнле аталанса пынине йĕркипе аса илсе каласси (ансат план тăрăх). Панă ыйтăва хуравлама текстри кирлĕ вырăна тупасси. Текстăн шухăш тĕлĕшĕнчен вĕçленнĕ пайĕсене уйăрасси, вĕрентӳçĕ пулăшнипе текст ятне ăнлантарасси, унăн тĕп шухăшне палăртасси.

Ансат план ăсласси, план тăрăх текст ăшлăхне асăмласа каласа парасси (туллин, кĕскен, суйлавлăн). Вуланине туллин тата суйлавлă каласа панă чух сăмахлă ӳкерчĕксем тăвасси, сăнарлă сăмахсемпе, сăмах майлашăвĕсемпе, синонимсемпе вырăнлă усă курасси.

Сăнарсене, çут çанталăка сăнласа кăтартнă чух усă куракан сăмахсене, вĕсен майлашăвĕсене текстра тупасси. Сăмахăн текстри пĕлтерĕшне ăнланасси. Сăнарсене вĕрентӳçĕ пулăшнипе хак парасси. Курни-илтни, сăнани çинчен çыхăнуллă калав тăвасси. Калаиă шухăша вуласа тухнă текстри тĕслĕхпе çирĕплетесси. Инсценировкăсене хутшăнса роль сăмахĕсене тивĕçле интонаципе вуласси.

**Илемлĕ литература жанрĕсен хăш-пĕр уйрăмлăхĕсем:** юмах (унта тĕлĕнмелле, чăн ггурнăçра пулма пултарайман ĕçсем пулса иртеççĕ), юптару (сăнарĕсем-тĕрлĕ чер чун, йывăç-курăк; вĕçĕнче вĕрентсе калани пур), сăвă (йĕркисем хăйне евĕр виçеллĕ, йĕрке вĕçĕсем пĕр пекрех янăраççĕ).

**Вĕренӳ кĕнекиие чухласси:** кирлĕ хайлава унăн тупмаллинчи ячĕ тăрăх тупасси; кĕнекене пĕр авторăн калавĕ е сăвви тĕлне уçасси; тема тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕрне çывăх хайлавсене асăрхасси; текст хыççăнхи ĕçсене харпăр хăй тĕллĕн ăнланса пурнăçласси.

**Класс тулашĕнчи вулав**

**Вулав материалĕ:** чăваш, вырăс, ытти тăванла халăхсен писателĕсем ачасем валли çырнă 15-20 кĕнеки, «Тантăш» хаçатпа «Тетте» журналти материалсем (вĕрентӳçĕ суйласа илнĕ тăрăх).

**Вулав тематики:** тăван тавралăх илемне сăнлакан, пурнăçа юратма, çут çанталăка упрама, сапăр та тараватлă пулма вĕрентекен, гсрлĕ халăх ывăлĕ-хĕрĕсен пархатарлă ĕç-хĕлне сăнлакан сăвăсемпе калавсем, пысăкрах калăштă хайлав сыпăкĕсем, юмахсем.

**Ача-пăча кĕнекипе ĕçлесси** (пĕлӳсем, ăслайсемпе хăнăхусем). Кĕнеке пайĕсене пĕлесси: титул листи, ум сăмах, тупмалли, вĕçĕнче калани. Кĕнеке мĕн çинченнине унăн пайĕсем тăрăх ăнкарасси. Класс тулашĕнчи вулав урокĕ валли кирлĕ кĕнекене шыраса тупасси. Класс тулашĕнче I çур çулта эрнере вăтамран 10—12, II çур çул вĕçĕнче 20—25 страницăран кая мар вуласси, вуласа пĕлнине ĕрентӳçĕ ыйтăвĕсем тăрăх каласа парасси. Кĕнекен ятне, авторне илме пĕлесси. Паллашнă писателĕн 2-3 кĕнекине астăвасси. ĕннĕ кĕнекесен списокĕпе, тема картотекипе усă курасси.

Çĕнĕ **литература ваййисем выляма вĕрентесси.** Вĕсене класс тулашĕнче те выляттарасси.

## 4 класс

## Литература вулавĕ. Класс тулашĕнчи вулав

**Вулав карти.** Ку вăл ман Тăван çĕр-шыв. Чăваш халăхĕ. Чăваш чĕлхи. Тăван халăхăн аваллăхĕ, ун çинчен калакан ваттисен сăмахĕсем, калавсем, сăвăсем, статьясем, пысăкрах хайлав сыпăкĕсем.

**Кĕр çитрĕ.** Кĕрхи çут çанталăк. Çынсен ĕçĕ-хĕлĕ. Чĕр чунсен пурнăçĕ. Ĕç çыннисем çут çанталăка упрассишĕн тăрăшни, çак ĕçе ачасем те хутшăнни. «Тăван тавралăх» экскурси.

**Кусем — манăн туссем.** Ачасен пурнăçĕ, вĕсен юлташлăхĕпе туслăхĕ, ĕçченлĕхепе сăпайлăхĕ. Туслă тантăшсем тăван халăхăн ырă йăли-йĕркине асра тытни.

**Ырăпа усал.** Ултавпа суя, тӳрĕлĕх-чăнлăх, хĕрхенӳпе хытă чуилăх, чурăслăх, ĕçченлĕхпе наянлăх, каппайчăклăхпа сăпайлăх, тӳрккеслĕхпе ыр кăмăллăх çинчен калакан хайлавсем, юмахсем.

**Çуркунне çитсессĕн...** Çурхи вăхăта, пурнăç илемĕпе унăн асамлăхне сăнлакан, çак илеме упрама чĕнекен хайлавсем.

**Атте-анне пурри — телей те пуянлăх.** Çемье, кил-йыш, çывăх çынсем çинчен калакан хайлавсем.

**Çу пуçланчĕ.** Çуллахи çут çанталăк. Тавралăх.

**Чĕр чунсем - пирĕн туссем.** Ачасемпе чĕр чунсем хушшинчи хутшăну. Чĕр чунсене юратас, шеллес, хӳтĕлес туйăмсене çуратакан хайлавсем.

**Усен-тăран тĕнчинче.** Вăрман-çаран, чечек-курăк çинчен калакан хайлавсем.

**Вăрçă кĕрленĕ чух.** Тăван çĕр-Я1ывăн āслă вăрçин паттăрĕсем, тыл ĕçченĕсем, Аслă Çĕнтерӳ çинчен калакан хайлавсем.

Халăх **пултарулăхĕ.** Чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем. Вĕсенче этем ăс-тăнĕн ырă енĕсем (ваттисене хисеплени, Тăван çĕр-шыва юратни, сăпайлăхпа ĕçченлĕхе ырлани, тĕрĕслĕхшĕн кĕрешни) палăрса тăни. Писательсем çырнă юмахсем, юптарусем, ытти халăхсен юмахĕсем, ваттисен сăмахĕсемпе туптарусем.

**Халăхăмăрăн** сумлă **çыравçисем.** Çеçпĕл Мишши, Митта Ваçлейĕ, П.Хусанкай, Я.Ухсай, Х.Уяр, А.Артемьев. Вĕсен уйрăм сăввисем, калавĕсем,, пысăкрах хайлав сыпăкĕсем, **Шурă юр çусассăн.** Хĕл вăхăтне сăнлакан хайлавсем. Вĕсенче тĭван тавралăха, тăван çĕре юратни палăрни. Хĕл тата çур вăхăчĕ çинчен калакан туптарусем, ваттисен сăмахĕсем. Çĕнĕ çул тата Риштав уявĕсем.

**Вырăссен манăçми çыравçисем.** А.Пушкин, Н.Некрасов,С.Есенин, М.Пришвин, Н.Сладков, А.Куприн, В.Бианки çырнă хайлавсем.

Вĕрентӳçĕпе ачасем хăйсем суйланă 7—8 сăвă, юптару пăхмасăр калама вĕренмелле.

**Вулав хăнăхăвĕсем.** Литература чĕлхин виçисене пăхăнса, тулли сăмахсемпе, ăнланса вуласси. Ку ӳсĕмшĕн юрăхлă текста ăшра вуласа ăнланасси. Вулав хăвăртлăхĕ минутра 90 сăмахран кая мар (ăшра вуланă чухне сăмах шучĕ 110 таран ӳсмелле). Ăнланман сăмах пĕлтерĕшне пĕтĕмĕшле пуплев пĕлтерĕшĕ çине таянса чухласа илесси. Мĕн пур предложение (хутсăррисене те, хутлисене те) тĕрĕс интонаципе вуласси.

**Текстпа ĕçлесси.** Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси. Вуланă текстăн тĕп шухăшне харпăр хăй тĕллĕн палăртасси, унăн пайĕсем шухăш енĕпе мĕнле çыхăнса тăнине асăрхасси, текстăн планне гăвасси. Мĕн вуланине харпăр хăй тĕллĕн тунă планпа усă курса туллин, кĕскен, тата суйлавлăн аса илсе каласси. Пĕр-пĕр темăпа калав тумалли материала текстра тупса палăртасси.

Хайлаври ĕçсене тĕрĕс, йĕркипе аса илесси, Сăнлавлă (çут çанталăка, çынна, пӳрт-сурт таврашне сăнлани), уйлавлă элементсемпе диалог кĕртнĕ текста аса илсе каласси, тӳрĕ пуплеве тӳрĕ мар пуплевпе улăштарасси.

Сăнарсен пуплев уйрăмлăхĕсене сăнасси, вĕсен ĕçĕсене, кăмăл-туйăмне (пĕр е темиçе калаври сăнарсене) танлаштарасси. Сăнарсем мĕншĕн, мĕн пирки çапла тунине каласси. Хăйсем тата автор çав пулăмсемпе сăнарсене мĕнле хакланине палăртасси.

Калаври, сăвăри, юмахри сăмахсен пĕлтерĕш уйрăмлăхĕ-сĕмĕсене ăдкарасси, вĕсемпе пуплевре усă курасси. Пулăма, çут çанталăка, çынна витĕмлĕ сăЕгаакан сăмахсене, вĕсен майлашăвĕсене (танлаштару, эпитет, метафора, фразеологиллĕ сăмах çаврăнăшĕ -терминĕсене асăнмалла мар) хайлавратупасси, вĕсене ăнланасси.

Сăнар ячĕпе е унăн ятне, калавçăн сăпатне улăштарса каласа парасси; калава малалла тăсасси, сăнарăн малашнехи пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен хушса каласси; сăнлавпа уйлав элеменчĕсем кĕртсе пулни-иртни, курни-илтни çинчен çыхăнуллă калав тăвасси. Халăхсăмахлăхĕ, калав, сăвă, юптару çинчен 1-1У классенче илнĕ пĕлĕве çирĕплетсе пĕтĕмлетесси.

Илемлĕ литература стилĕпе ăслăлăх стилĕн уйрăмлăхĕсене асăрхама хăнăхтарасси.

Ачасен сăмах йышне куллен пуянлатса çĕнетесси. Вĕсен пуплевĕн пахалăхне (ăсталăхне, çыхăнулăхне, витĕмлĕхне, уçăмлăхĕпе палăртулăхне) лайăхлатасси. Калаçура та, вуланă чух та шухăш-туйăма интонаци мелĕсемпе (хăвăртлăх улшăнăвĕ, сасă хулăнăшĕ, тăхтавсем, шухăша палăртакан пусăм, пуплев кĕвви) тĕрĕс палăртасси.

**Вĕренӳ кĕнекине чухласси:** тупмаллипе, пулăшу тата меслет аппарачĕпе (текст хыççăнхи ыйтусемпе ĕçсем, ăнлантарусем, вĕтĕ шрифтпа çырса панисем х.ыт.те) усă курасси. Кĕнекепе хăйсем тĕллĕн ĕçлесси.

**Класс тулашĕнчи вулав**

**Вулав материалĕ.** Кĕçĕн çулхи ачасем вапли кăларыă чăваш, вырăс тата ытти тăванла халăхсен, ютри çыравçăсен кĕнекисем. «Тетте» журналпа «Тантăш» хаçатри материалсем.

**Вулав тематики.** Аваллăх çинчен. Ырă пурнăçа ĕмĕтленсе пурăнакан халăхăн кулленхи еçĕсем. Ачасен ĕçĕ-хĕлĕ. Чăваш, вырăс тата ытти тăванла халăхсен юмахĕсем. Тăван халăх историйепе унăн ывăлĕ-хĕрĕ, ал ĕç тата ăс-хакăл культури çинчен çырнă кĕнекесем. Наукăпа техника темипе çырнă ачасем ăнланмалла статьясем. Темтепĕр курса çӳрени çинчен калакан хайлавсем.

**Ача-пăча кĕнекипе ĕçлесси.** Класс тулашĕнчи вулав урокне хатĕрленнĕ май кирлĕ кĕнекене

харпӑр хӑй тӗллӗн суйласа вулама, тӗрлӗрен пулӑшу кӗнекипе, хаҫат-журналпа усӑ курма пӗлесси.

Вӗрентӳҫӗ сӗннӗ е харпӑр хӑй тӗллӗн тунӑ плангта усӑ курса мӗн вуланине (унӑн пайӗсене) кӗскен каласа парасси, вуланӑ сӑнар ҫинчен ҫыхӑнуллӑ калав тӑвасси. Вулама сӗннӗ кашни темӑпах 3—5 кӗнеке таран гтӗлесси. Пулӑшу кӗнекисемпе (словарь, справочник) усӑ курасси.

«Тантӑш» хаҫатпа «Тетте» журнала тӗллевлӗ вуласси, вӗсемпе урокра тата класс тулашӗнче усӑ курасси.

Кӗнеке мӗн ҫинченнине унӑн хуплашки, титул листи, тупмаллипе ӳкерчӗкӗсем, ум сӑмахӗпе юлашкинчен калани тӑрӑх ӑнкарасси. Кирлӗ кӗнекен е хаҫат-журналти статьян ятне, унӑн авторне кӑтартса тӗрӗс ҫырса илесси. Кӑмӑла каякан кӗнекене харпӑр хӑй тӗллӗнех библиотекӑран илсе вуласси.

**Литература вулавне пахалани.**

Литература вулавне пахаланӑ чухне сасӑпа, ӑшра вуланине, ыйтусене еплерех хуравланине шута илмелле. Хакламалли вулав тексчӗн калӑпӑшӗ: 2-мӗш класра—вӗренӳ кӗнекинчи страницӑн 1 /4 пайӗ, 3-мӗш класра — 1/3 пайӗ, 4-мӗш класра — 1/2 пайӗ. Вӑл е ку паллӑна мӗншӗн лартнине ӑнлантармалла, ачасене тӗрӗс те ӑнкарса вулама, текста тулашӗпе ӑшлӑхӗ тӗлӗшӗнчен тарӑнрах сӳтсе явса пахалама хавхалантармалла.

Литература вулавне вӗрентӳ ҫулӗнче икӗ хутчен пӗтӗмӗшле тӗрӗслесе хаклаҫҫӗ, 1 -мӗш ҫур ҫул вӗҫӗнче тата 2-мӗш ҫур ҫул (вӗренӳ ҫулӗ) вӗҫленес умӗн.

## 3. Литература вулавӗ урокӗсен тематикӑллӑ планӗ

### 1-мӗш класс

| № п/п | Тема | Сехет шучӗ |
|---|---|---|
| 1 | Шкула каяр-ха вӗренме | 2 |
| 2 | Халӑх сӑмахлӑхӗ. | 4 |
| 3 | Юмах юпа тӑрринче… | 1 |
| 4 | Вӑйӑ вылятпӑр. | 2 |
| 5 | Теттесем. | 1 |
| 6 | Ачасем ҫинчен. | 2 |
| 7 | Чӗр чунсем ҫинчен. | 3 |
| 8 | Тавралӑх – асамлӑ тӗнче. | 1 |
| 9 | Килсе ҫитрӗ хаваслӑ хӗл. | 3 |
| 10 | Ача – пӑча сӑмахлӑхӗ | 3 |
| 11 | Юмах ятӑм, юптартӑм. | 1 |
| 12 | Пирӗн вӑйӑ-кулӑ. | 1 |
| 13 | Ачасем ҫинчен | 4 |
| 14 | Чӗр чунсем ҫинчен | 3 |

| | | |
|---|---|---|
| 15 | Тавралăх – асамлă тĕнче | 2 |

## 2 класс

| № п/п | Тема | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Шкула | 2 |
| 2 | Мĕн-ши вăл тăван çĕршыв | 7 |
| 3 | Кĕркунне | 5 |
| 4 | Халăх сăмахлăхĕнчен | 5 |
| 4 | Юмахсем | 8 |
| 5 | Эпир—туслă та хаваслă ачасем | 6 |
| 6 | Хĕл | 6 |
| 7 | Ĕç телей те савăнăç кӳрет | 6 |
| 8 | Тăван кил-йышра | 3 |
| 9 | Килчĕ ырă çуркунне | 5 |
| 10 | Чĕр чунсем—пирĕн туссем | 7 |
| 11 | Ӳсен-тăрансен тĕнчи | 3 |
| 12 | Çу уйăхне кĕтĕмĕр | 1 |

## 3 класс

| № п/п | Тема | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Ак çитрĕ сентябрь... | 3 |
| 2 | Чăваш çĕршывĕ | 6 |
| 3 | Кĕркунне | 6 |
| 4 | Халăх сăмахлăхĕ | 9 |
| 5 | Улăп йăхĕнчен эпир, туссем... | 9 |
| 6 | Асамçă хĕл | 5 |
| 8 | Эпир-сăпайлă ачасем | 22 |
| 9 | Çур хаваслăхĕ | 11 |
| 11 | Чĕрчун тĕнчи | 17 |
| 12 | Ытарайми, асран кайми тăван тавралăх | 14 |

4 класс

| № п/п | Тема | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Аван – и, шкул саккийĕ!. | 3 |
| 2 | Килсе çитрĕ тулăх кĕр | 6 |
| 3 | Ку вăл – ман Тăван çĕршыв | 6 |
| 4 | Пирĕн йăла – йĕрке | 6 |
| 5 | Кусем – манăн туссем | 8 |
| 6 | Шурă юр çусассăн | 4 |
| 7 | Чăваш халăх сăмахлăхĕнчен | 5 |
| 8 | Ырăпа усал. | 5 |
| 9 | Атте – анне пурри – телей тата пуянлăх | 3 |
| 10 | Ӳсен – тăран | 4 |
| 11 | Çуркунне çитсессĕн | 3 |
| 12 | Чĕр чунсем – пирĕн туссем | 6 |
| 13 | Вăрçă кĕрленĕ чух | 4 |
| 14 | Çу пуçланчĕ | 5 |